*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

22 (2609) №
Хакĕ ирĕклĕ

# Хресчен сасси

2016
çĕртме
9

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН

*РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔНЧЕ*

# Хĕле валли сĕтеклĕ апат

**Хĕл хырăмĕ пысăк тенĕ. Республикăри чылай хуçалăхра выльăх апачĕ хатĕрлеме тытăннă. Кăçал утă – 600 пин, силос – 200 пин тонна, çавăн чухлех сенаж кирлĕ пулать.** «Çакă сĕт – 147 пин, аш-какай 127 пин тонна туса илме май парать. Сăвăм ÿсĕмĕн 60 процентчĕ апат пахалăхĕнчен килет», – палăртнă ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов Шупашкар районĕнче утçипе паллашнă май.

Ку тăрăхри «Ольдеевский» агрофирмăра техника ир-ирех уй-хирте, ешĕл курăк çулать. Хуçалăх çулсерен выльăх апатне ытлă-çитлĕ хатĕрлеме тăрăшать. Çакă сăвăм кăтартăвĕнче те сисĕнет. Иртнĕ çул ĕне пуçне 7839 кг сĕт сунă. Кăçалхи тăватă уйăхра кăтарту пĕлтĕрхинчен 14,6 процент ытларах.



«Чурачикское» хуçалăх уй-хирĕнче

Агрофирмăн сухаламалли лаптăксем 1284 гектар. Çав шутра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем – 421, выльăх апачĕ культурăсем 863 гектар. Ака-суха ĕçĕсем вĕçленнĕ ĕнтĕ. Халĕ мĕнпур техника уй-хирте, люцерна çинче. Çак тапхăрта 300 гектар çинчен çулса пуçтарнă, 1200 тонна ытла сенаж хывнă. Хуçалăхра ытларах сенаж хатĕрлеме тăрăшаççĕ, унра тутлăхлă япаласем, протеин нумай-мĕн. Вĕсем сăвăма ÿстерме пулăшаççĕ.

«Атлашевский» хуçалăх вара сĕтеклĕ апат хатĕрлессипе районта малта пырать. Кунта çурхи ĕçсене вĕçлесенех ешĕл курăк çине тухнă. Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем 1167 гектар йышăннă. Хальхи вăхăтра нумай çул ÿсекен курăксене 500 гектара яхăн çулнă, 1 пин тонна ытла сенаж хывнă. Хуçалăхăн майракаллă шултра выльăх 1596 пуç, çав шутра сăвăнаканнисем – 800. Кĕтÿре хурашурă ăратлисем. Пĕлтĕр 4512,5 тонна сĕт сунă е унччєнхинчен 38, 6 процент нумайрах. Çулталăкри ĕнен сăвăмĕ 6320 кг.

Выльăх-чĕрлĕх йышлă усранă май апатне те самай хатĕрлемелле. Кăçал курăк çулма çĕнĕ комбайн тухнă. Çавна май ĕç хăвăртлăхĕ палăрмаллах ÿснĕ.

Шупашкар районĕнче нумай çул ÿсекен курăксем 6 195 гектар йышăнаççĕ. Çав шутра 1 пин ытла гектарне çулнă. Ку ĕçе сакăр хуçалăх тытăннă. Чи пысăк уйсем «Атлашевский», «Ольдеевский» хуçалăхсен. «Чурачикское» пĕрлешĕвĕн те лаптăксем пушансах пыраççĕ.

## Ака-суха, утçи (çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕ тĕлне)

◆ **Республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем 212 603 пин гектар çинче акнă (палăртнин 98,4 процентчĕ). 15 районта акмалли плана тултарнă. Улатăр тăрăхĕнче вăл 82,5 процентна танлашнă. Вăрнар, Куславкка, Красноармейски, Çĕрпÿ, Шупашкар районĕсенче палăртнине пурнăçлайман-ха.**

◆ **Çĕрулми 8,9 пин гектар лартнă (планăн 90,7 процентчĕ). Патăрьел енче чи пысăк лаптăк – 1676 гектар, Комсомольски тăрăхĕнче 1222 гектар йышăннă. Хуçалăхсенче çĕрулмиречĕ хушшине кăпкалатаççĕ.**

◆ **Пахчаçимĕç 1103 гектар акнă-лартнă.**

◆ **95 гектар çинче хăмла хунавне çакнă.**

◆ **Пĕрчĕллĕ культурăсене им-çамлассипе те ĕçлеççĕ.**

**Ял хуçалăх организацийĕсенче выльăх апачĕ хатĕрлеме тытăннă. Çак вăхăт тĕлне нумай çул ÿсекен курăксене 6340 гектар çинчен çулнă. Ку енĕпе Елчĕк районĕ малта, 1495 гектар пушаннă ĕнтĕ. Шупашкар районĕнче – 1208 гектар. Улатăр, Куславкка, Муркаш, Çĕмĕрле тăрăхĕсенче те çывăх вăхăтра ĕçе пуçăнмалла.**

◆ **Утă – 853 тонна хатĕрленĕ. Елчĕк, Шăмăршă районĕсенче вăл ытларах. Сенаж 8130 тонна пур. Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар, Патăрьел, Сĕнтĕрвăрри енче сĕтеклĕ апата самай хывма ĕлкĕрнĕ.**

## Раççей, Республика кунĕсене халалласа

**Çывхарса пыракан Республика кунĕнче кăçал яланхи пекех Шупашкарта IX экономика форумĕ иртет (çĕртме уйăхĕн 23-24-мĕшĕсенче).** ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илÿ министрĕ Владимир Аврелькин палăртнă тăрăх – Раççей шайĕнчи мероприятие хутшăнма хальлĕхе 600 çын килĕшнĕ.

XXIII регионсем хушшинчи курав çĕртме уйăхĕн 23-26-мĕшĕсенче "Контур" комплексра иртет. Ăна Ĕç çыннин çулталăкне халалланă. Пĕрремĕш хутра – Чăваш Республикинчи районсемпе хуласен тата Итали компанийĕсен, иккĕмĕшĕнче ĕç тăвакан влаç органĕсен, регионти организацисен тата ытти хуласенчен килсе çитнĕ хăнасен экспозицийĕсене вырнаçтараççĕ.

Çавăн пекех Шупашкар заливĕ хĕрринче йăлана кĕнĕ Пĕтĕм тĕнчери фейерверк фестивальне те хатĕрленеççĕ. Унта Шупашкар, Мускав, Сергиев Посад хулисен, Беларуç тата Казахстан командисем хутшăнаççĕ.

Ытти культура мероприятийĕсем те яланхиллех иртеççĕ.

Унччен маларах Раççей кунне (çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕ) халалласа районсемпе хуласенче ĕçпе юрă, спорт уявĕсем йĕркелеççĕ.

## Программăна тăснă

**ЧР Патшалăх Канашĕн 38-мĕш сессийĕнче нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕпе тивĕçтерессипе çыхăннă саккун проектне (улшăну кĕртнĕ хыççăн) сÿтсе явнă.**

Унпа килĕшÿллĕн хальчен республикăра "ĕçленĕ" саккуна 2018 çулхи раштавăн 31-мĕшĕччен тăснă. Ку улшăнăва Раççей Президенчĕ Владимир Путин амăшĕн (çемье) капиталне парассипе çыхăннă программăна 2018 çулхи раштавăн 31-мĕшĕччен тăснине шута илсе кĕртнĕ.

## Пысăк хак панă

**Мускавра уçăлнă "Хĕрлĕ площадь" кĕнеке фестивалĕнче Чăваш кĕнеке издательствин экспозицийĕпе РФ Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев паллашнă.** Вăл уйрăмах 4 томлă Чăваш энциклопедине пысăк хак панă. Юлашки виçĕ çул издательство 1 млн экземпляра яхăн кĕнеке кăларнă.

Çак фестивальте гуманитари ăслăлăхĕсен тытăмĕнчи чи лайăх кĕнеке шутне "Чăваш Республикин археологи картти", "Чи лайăх вĕренÿ кĕнеки" номинацире "Шкулти чăваш тĕрри" кĕнĕ.

*УЯВ*

# Ăмăртура – ял спортсменĕсем

**1951 çул пуçламăшĕнче Чăваш АССР Министрсен Канашĕ çумĕнче «Колхозник» (1956 çултанпа – «Урожай») физкультурăпа спорт обществи туса хунă. Çавăн хыççăн республикăра физкультурăпа спорт лайăх аталанма тытăннă.**

7-мĕш стр. ➔










Снижены ставки

по кредитам на развитие личных подсобных хозяйств

**Телефоны в Чебоксарах:**
**(8352) 66-22-06, 58-80-02**

Звонок по России бесплатный
**8 800 200-02-90 | www.rshb.ru**
Подробности по телефону, на официальном сайте и в офисах АО «Россельхозбанк».
Генеральная лицензия Банка России №3349 (бессрочная). Реклама.


*АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ*

# Выльăх хуçине пăхать

***Выльăх-чĕрлĕхрен продукци илесси ăратлăхран нумай килет. Ăратсăр, пĕчĕк сăвăмлă ĕнене тепле çитерсен те кăтартăва ÿстереймĕн. Çак кунсенче Шупашкар районĕнчи "Чувашское" пĕрлешÿре выльăх-чĕрлĕх ăратлăхне аталантарассипе республикăри канашлу иртрĕ.***

Çĕр хут илтиччен, пĕрре курасси тенĕ. Çак кун пĕрлешÿ пуçласа таварне халăха кăтартрĕ. Ăна валли картишĕнче ятарлă площадка хатĕрленĕ. Унччен хуçалăх специалисчĕсем ăратлă вăкăрсемпе хут тăрăх кăна паллашнă темелле. Выльăхсене çĕршыври паллă предприятисенчен туяннă. Тĕпрен илсен 1-3 çултисем. Анчах "ветеран" та пур иккен. "Лиман" вăкăр 9-мĕш çул пĕрлешÿре. Çак тапхăрта республикăри хуçалăхсенчи кĕтĕве вăл пулăшнипе сахал мар ăратлă выльăх хушăннă. Юлашки çулсенче сăвăм кăтартăвĕ ÿснинче унăн тÿпи те пур-тăр.

– Предприяти Чăваш Енри хуçалăхсене ăратлă выльăх вăррипе (пĕтĕлентерме) тивĕçтерет. Юлашки икĕ çулта Ленинград облаçĕнчен 13 пысăк ăратлă вăкăр туяннă. Вĕсен шучĕ ÿссех пырать. Республикăри Етĕрне тăрăхĕнчи "Ленинская искра", "Родина", Шупашкар районĕнчи "Атлашевский", "Ольдеевский" тата ытти организацисемпе çыхăнса ĕçлетпĕр. Шел, чылай хуçалăхра специалистсем çитмеççĕ. Вĕсене пулăшма хамăр çынсене яратпăр. Ăратлăха çĕнетни, селекци ĕçне лайăхлатни 2020 çул тĕлне Чăваш Енре çулталăкра пĕр ĕнен сăвăмне 7500 килограма çитерме май парĕ. Сĕтри белок, çу шайĕ те палăрмаллах ÿсмелле.

Ларăва уçнă май ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов республикăри выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ăратлăхпа ĕçлесси тĕп вырăнта пулнине палăртрĕ. Юлашки вăхăтра çак енĕпе лару-тăру лайăхланма тытăнни сисĕнет. 2016 çулхи кăрлач-ака уйăхĕсенче мĕнпур категорири хуçалăхсенче аш-какай илесси – 27,6, сĕт 0,03 процент ÿснĕ. 21 районтан 15-ĕшĕнче ĕне продуктивлăхне лайăхлатни пĕтĕмĕшле кăтартура та палăрнă.

Кăçалхи çу уйăхĕ тĕлне республикăра ăратлă выльăх ĕрчетессипе 27 хуçалăх ĕçлет. Вĕсем сĕт (17 хуçалăх), аш-какай (1), лаша (1), сысна (7), качака (1), пулă (1), чăх-чĕп (3) усраççĕ. Çавăн пекех выльăх-чĕрлĕхе искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли центр, сĕт пахалăхне тĕрĕслекен лабораторие ĕçлет. Кăçал 1 ăратлă ĕне тытнăшăн патшалăх 4410 тенкĕ парса пулăшмалла. Ытти выльăхшăн – 3712 тенкĕ.

Республикăра сĕт туса илекен хуçалăхсенче ĕнесен 27,7 проценчĕ ăратлăхпа ĕçлекен организацисене шутланать. Кăçалхи тăватă уйăхра вĕсенче ĕне пуçне 2076 кг сĕт сунă, ыттисенчи кăтарту – 1684 кг. Çак тапхăрта предприятисем 192 ăратлă мăйракаллă шултра выльăх сутнă.

"АПК аталанăвĕ" наци проекчĕ пурнăçланма тытăннăранпа 256 инвестици проекчĕ хута кайнă. Çĕнĕ проектсем пурнăçа кĕни выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк йышне палăрмаллах ÿстернĕ. Кăçалхи вицĕ уйăхра Вăрнарти аш-какай комбиначĕн кĕтĕвне 200 ĕне хушăннă. Халĕ унта пурĕ 1300 пуç. Шупашкар районĕнчи "Атлашевский" хуçалăхра та унччен-хинчен 20 ĕне ытларах (пурĕ 800 ĕне). "Юрма" агрохолдингра, "Акашевская" пĕрлешÿре – чăх-чĕп, "Çĕрпÿ беконĕ" (Çĕрпÿ районĕ), "Юрма" агрохолдингра (Патăрьел районĕ), "Сувар-2", "Прогресс" (Шупашкар районĕ) пĕрлешÿсенче сысна какайне туса илессипе кăтартăва палăрмаллах лайăхлатнă.

Республикăра кĕтĕве упраса хăварма выльăх апачĕпе çителĕклĕ тивĕçтермеллине палăртрĕ министр. Чылай хуçалăхра утă, сенаж хатĕрлеме тытăннă ĕнтĕ. Кăçал ĕне пуçне 40 центнер апат единицинчен кая мар янтăламалла. Фураж та самай кирлĕ пулать. Ăна ăçтан тупмалла? Усă курмасăр выртакан çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртни тырă ытларах туса илме май парĕ. "Тырă – чĕрĕ тавар, лайăх сутăнать. Хальхи вăхăтра 1 килограмне 10 тенкĕ ытларахпа илеççĕ, анчах çитмест вăл. Çавăнпа ăна кÿршĕ регионсенчен турттарма тивет", – терĕ министр. Фураж та хаклă паян. Аякран пысăк хакпа туяниччен вырăнта туса илнине нимĕн те çитмĕ.

Чăваш Енри сĕт, какай выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетекен организацисене кăçал патшалăх пулăшăвĕ тивмелле.

Ăна чи малтан ял хуçалăх производствине аталантармашкăн инвестици проектне пурнăçа кĕртме тата сĕт-çу фермисене тĕпрен юсама кайнă тăкака саплаштарма уйăрĕç. 2006 çултан выльăх-чĕрлĕхрен продукци илессине ÿстерме республика бюджетĕнчен те пысăк продуктивлă ĕнешĕн хушса тÿлеççĕ.

Çакна та палăртмалла, патшалăх пулăшăвне кура юлашки пилĕк çулта кашни ĕнерен сĕт сăвасси çулсерен ÿссе пырать (2010 çулта – 4158 кг, 2015 – 4905 кг). Республика хальхи вăхăтра вырăнта туса илекен сĕтпе халăха туллин тивĕçтерет. Çакă ăратлă ĕнесем усрама тытăннипе те çыхăннă.

**Лариса НИКИТИНА.**

*ĔÇ ÇЫННИ*

# Вĕлле хурчĕ пек тăрăшаççĕ

**"Сăкăт ялĕнче пурăнакансем вĕлле хурчĕ пек ĕçлеççĕ", – ытараймасть тăван ял çыннисене Вера Федоровна Славницкая. Акă Октябрь урамĕпе иртсе пынă чухне те çĕннине пĕлтермесĕр чăтаймарĕ хăнасене питĕ тараватт хĕрарăм. "Вунă кил хуçалăхĕ кунта. Çак урамран кĕтĕве мĕнпурĕ 36 ĕне çÿрет. Хушма хуçалăхра 2-3-шер выльăх усраççĕ, ÿркенмеççĕ", – палăртрĕ вăл.**



Николай Славницкий

Славницкийсем хăйсем те юлхавлисен шутĕнче пулманнине пĕлсен хуçалăхне çитсе курмасăр чун лăпланмарĕ. Вĕлле хурчĕсен ĕçлĕ тĕнчине, илемлĕ сад çăтмахне лексен кунти çынсем чăвашла илемлĕ калаçнине итлесе, тавракурăма тĕрлĕ енлĕн аталантарма ăнтăлнине туйса килентĕм. Çутçанталăкпа пĕр тĕвĕре пурăнма тăрăшакан çын чăннипех нумай пĕлет, ăнланать, ĕмĕр тăршшĕпе вĕренет. Паллах, ыррине.

Кил хуçишĕн, Николай Алексеевичшăн, кашни вĕлле хурчĕ çын шутĕнче. "Пĕлесчĕ сирĕн вĕсем мĕнлерех аталаннă шайра пурăннине. Пирĕн вĕсенчен пайтах вĕренмелле", – ахăртнех, калаçтенине сăмахпа ăнлантарасса шанмасăр палăртрĕ арçын. Эпĕ хуртсенчен пач шикленменнине асăрхасан хавхаланăвне пытармарĕ. Утар ĕçĕпе Славницкийсем 20 çул ытла тăрмашаççĕ. Ку ăсталăх йăхран йăха куçать. Аслисенчен (кукамăшĕнчен) вĕренсе юлнисĕр пуçне тĕрлĕ кĕнекепе паллашнă, лайăххипе ĕçре усă курнă.

Палăртмалла, Сăкăтра вĕлле хурчĕ усракан сахал мар, анчах вĕсем пĕр-пĕринпе тупăшмаççĕ. Çутçанталăкри чĕрчуна чунпа туякан тепĕр çынна усал сунмĕ, япăх тумĕ. Николай Алексеевич асăннă тăрăх – пурнăçа вĕлле хурчĕсенчен вĕренмелле. Кÿршĕри утарçăсемпе Славницкийсем туслă. Тĕслĕхрен, Александр Муллинпа, Станислав Силюковпа тата ыттисемпе те сÿтсе явмалли, пĕр-пĕрне паллаштармалли тупăнсах пырать.

6-мĕш стр. ➔


ÇЫРĂНТАРУ – 2016

**2016 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене çак хаксемпе çырăнтараççĕ:**

**«Хыпар» – 736,02 тенкĕ,**
**«Хыпар-эрнекун» – 338,34 тенкĕ,**
**«Хресчен сасси» – 260,28 тенкĕ.**

**Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене «Советская Чувашия» хаçат киоскĕсенче те çырăнтараççĕ.**

# Арçын ертӳçĕсем юрласа ĕçлеççĕ

***"Пирĕн Карапай Шăмăршă ачисем мĕнле кăмăллă вĕт-ха. Вĕсенчен усал сăмах илтсе курман. Ыйтсан чĕнмесĕр иртмеççĕ, хуравлаççĕ, калаçаççĕ", – палăртать Галина Николаевна Петькова.***

"Культура ĕçченĕ хăйĕн ял çыннисене тиркемест ĕнтĕ", – вĕлтлетрĕ çак вăхăтра шухăш. "Каçсерен юрă-ташă каçĕсене "кикирикисене" хĕретсе тухакан та тупăнмасть-и вара?" – чĕлхе вĕçне килнĕ ыйтăва параймасăр чăтаймарăм эпĕ. "Пĕр çитменлĕхсĕр е идеаллă çын тĕнчере те çук пулĕ. Анчах клуба çӳрекен çамрăксем иртĕхеççĕ, криминал ĕçсем тăваççĕ тесе калаймăп", – хăйĕн шухăшĕ çинче çирĕп тăчĕ хĕрарăм. Çакăн хыççăнах ялти яшсем çара каяс умĕн яланах культура çуртне кĕрсе тухнине асăнчĕ. Кунашкал сывпуллашу кунта йăлана кĕнĕ иккен.



Фольклор ушкăнĕ

Çак тĕслĕхпе ĕнентерме тытăнче те мана Галина Николаевна ял халăхĕ культурăпа çывăх пулнине. Ку ĕçре вăл ултттăмĕш çул тăрăшать. Маларах библиотекăра вăй хунă, ял администрацийĕн специалисчĕ те пулнă. Общество ĕçĕнчи хастарлăхне кура ăна вырăнти хĕрарăмсен канашне ертсе пыма та шаннă, ял тăрăхĕн депутатне те суйланă. Культура тытăмне вара пултарулла ертӳçĕ Зинаида Падюкова тивĕçлĕ канăва кайнă хыççăн йышăннă. Галина Николаевнăшăн чи пахи – халăх шанни, итлени. Хăй каланă тăрăх – унăн хӳттине, пулăшăвне вăл туять.

Акă, ыран е виçмине каччăн салтака тухса каймалла. Унччен маларах вăл юлташĕсемпе ялти культура çуртне юрласа кĕрет. Йышлă ушкăнра тăванĕсем те пур. Вĕсем те, Галина Николаевна та çара каякан ачана инçе çула ырă сунса ăсатаççĕ. Темиçе хут çĕклесе маччаналла ывăтаççĕ. Ĕçсе ӳсĕрĕлессишĕн йĕркеленĕ уяв мар ку. Кашни ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачине çара çакăн пек йăлапа ăсатасшăн, çавăнпа малтанах пĕлтерсе хураççĕ. Ара, культура çурчĕн ĕçченĕсем пулас салтаксемпе хавхалантарулла конкурссем те ирттереççĕ-çке.

"Паттăрлăх" клуб та культура çуртĕнче 20-30 çул ĕçлет. Хăй вăхăтĕнче Карапай Шăмăршă ял тăрăхĕн пуçлăхĕнчен Шăмăршă район администрацине ертсе пыма кайнă Владимир Денисов спорта аталантарассине питĕ тимленĕ. Вăл пуçарнă мероприятисем халĕ те пурнăçланаççĕ, шашка-шахмат ăйăйисем таранах.

Ял тăрăхĕн хальхи пуçлăхне Вячеслав Яковлева та ырламалла. Служба тивĕçне кура культурăна пулăшать çеç мар, хăй те ансамбльте юрлать. Шкул директорĕ Юрий Ермолаев та унран юлмасть. Арçын ертӳçĕсем концертсене хутшăнни пĕрре культура тытăмне вăйлатать, тепре халăха ăна хаклама вĕрентет. Ертӳçĕ тĕрлĕ енчен ырă тĕслĕх кăтартни çамрăксемшĕн, шкул ачисемшĕн пĕлтерĕшлĕ. Ял пуласлăхĕ, малашлăхĕ çакăн пек çынсенчен питĕ нумай килнине ахальтен асăнмасть Галина Петькова.

Вячеслав Яковлевран, Юрий Ермолаевран, шкулта ĕçленĕ Геннадий Деомидовран тата ыттисенчен тăракан хутăш ансамбле куракансем яланах хапăлласа йышăнаççĕ. "Никто тебя не любит так, как я" юрра темиçе хут шăрантарма ыйтаççĕ.

Культура çурчĕ ытти ансамбльпа та пуян, çав шутра – фольклор ушкăнĕпе те. Карапай Шăмăршăсемсĕр районти пĕр уяв та иртмест темелле. Юрлакансем (Надежда Медведева аккомпаниатор нумай пулăшать) те, ташлакансем (хореографи ушкăнне Шăмăршăран ятарласа çӳрекен Антонина Нефедова вĕрентет) те тăтăшах кӳршĕ ялсене, районсене тухса çӳреççĕ. Нумаях пулмасть Патăрьел районĕнчи Алманчăкра, Сăкăтра пулнă. Çемье ансамблĕсем те çук мар ялта. Ку енĕпе Измайловсем, Яковлевсем маттур.

Культура хастарĕсенчен çавăн пекех Нина Мамонтовăна, Светлана Сидоровăна, Зоя Измайловăна, Людмила Столяровăна тата ыттисене палăртмалла.

Мĕнпурĕ 13 кружок ĕçлет кану çуртĕнче. Халăхăн тĕрлĕ сийне культурăна явăçтарас, унпа паллаштарас тĕлĕшпе вун-вун мероприяти иртет. Культура "çимĕçĕ" часах пиçсе çитмест, унăн çулĕ вăрăм. Халăхпа паян чăваш чĕлхи çинчен тĕплĕ калаçни, ыран мĕн ĕмĕр тăршшĕпе вăрман е ял хуçалăхĕнче тар тăкнă çынсене хисеп туса чыслани е яш-кĕрĕме ырă сунса пил пани чунра юлать, ăруран ăрăва куçать.

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Кил-çурчĕ чаплă, клубĕ вара...

**"Эх, клуба çĕнетсен-и?.. Паллах, халăх ытларах çӳреме тытăнĕ", – тет Канаш районĕнчи Ăвăспӳрт Кипечри Ирина Михайловна Митрофанова.**



Культура çурчĕ

Кунти культура çуртне ертсе пырать вăл. Паян тепĕр çыннăн хуралти унран чаплăрах пулĕ. Ара, ялти чиркӳпе танлаштарсан та уйрăмлăх çĕрпе пĕлĕт хушшинчи пекех. Лешĕ инçетренех çуталса ларать. Ăна тума çак ялта çуралса ӳснĕ, халĕ инçетре пурăнакан ентеш нумай пулăшнă теççĕ. Халăх та укçа пуçтарса хăй тӳпине хывнă. Çакна кура çамрăксен, паллах, чаплă та хăтлă клуба çӳрес килет. Çавăнпах вĕсем çĕнĕ культура çуртне чăтăмсăррăн кĕтсе пурăнаççĕ.

Вĕсене çухатас мар тесе Ирина Михайловна клуба тăтăшах чăваш эстрада çăлтăрĕсене йыхравлама тăрăшать. Эпир çитнĕ кун та Шупашкартан черетлĕ ушкăн çитессе пĕлтерчĕ. Хĕллехи вăхăтра "Каçхи улах" кружок ĕçлет-мĕн. Хĕрарăмсем пĕрле пуçтарăнса илемлĕ япаласем çыхаççĕ, пĕр-пĕринчен вăл е ку алă ăсталăхне вĕренеççĕ. Выставка йĕркелес тĕлĕшпе Ирина Митрофанова ялти ватăсенчен упранса юлнă тĕртнĕ пир кĕпесем, ĕлĕкхи ытти япалсем пуçтарнă.

Хăтлăха вĕреннĕ çыннăн кунашкал çурта хаваспах ура ярса пусас килменнине ăнланмалла. Вăл самаях кивĕ. Хăй ларакан пӳлĕмри чӳречене хĕрарăм уçма та шикленет. Кантăкĕ темиçе вырăнта çурăлнăран хашакĕнчен тухса ӳкме те пултарать. Кăштах сăн кĕртес тĕлĕшпе çӳхе стена çине обойсене Ирина Михайловна хăй çыпăçтарнă. Çулла сивве туймастăн, хĕлле клубра, ахăртнех, ал-ура самаях шăнать. Куракансем ларакан пӳлĕмре те ăшă батарейисем тăтăшах шăтаççĕ иккен.

Пĕрре – сивĕрен, тепре çурт ишĕлсе анассинчен шикленет халăх. "Ара, кун пек çурта мĕнле ĕçлеттереççĕ вара?" – тетĕр пулĕ-ха. Паллах, надзор органĕсем ăна тĕрĕслесех тăраççĕ. Пушар сигнализацийĕпе тивĕçтернĕрен хальлĕхе вăл ĕçлет. Çитес хĕле кĕмешкĕн хатĕрленме, юсаса илемлетме виçĕ банка сăрă панине асăнчĕ клуб заведующийĕ.

"Çĕнĕ çурт тăвасси пирки калаçаççĕ-и?" – ыйтрăм унран. "Шантараççĕ, вырăнти ертӳçĕ строительствăна проекта кĕртес тĕлĕшпе тăрăшать, анчах пурте унран килмест-çке", – пулчĕ хурав.

Çынсемпе калаçнă май кунти ял тăрăхĕн пуçлăхне ытла хурланине илтмерĕм. Вĕсем ĕненсе тăнĕ тăрăх – пурнăçа лайăхлатма, чăн та, ăнтăлать-мĕн. Анчах çĕнĕ культура çуртне Ăвăспӳрт Кипечсен тата мĕн чухлĕ кĕтмелле-ши?

"Районта пирĕннинчен япăхраххи те пур", – асăнчĕ калаçура клуб ертӳçи. Апла ял халăхне чăтăмлăх сунмалли çеç юлать. Пурри çук мар тенине тĕпе хурсан кивви, тен, "чунĕ" тухиччене ларĕ.

КĔСКЕН

## Чăваш халăх историне – тăван чĕлхепе

**Çĕрпӳ районĕнчи Çырмапуç ачисем таврапĕлӳлĕх "тĕнчине" çитсе курнă. Шкул çумĕнче йĕркеленĕ лагерьте канакансем валли ял библиотекинче краеведени литературин уявĕ иртнĕ.**

Чăваш халăх юррипе, чăваш поэчĕн Петĕр Хусанкайăн сăввипе пуçланнă мероприятире ачасем тăван халăх историне, сăмахлăхне, çыравçисене тĕпе хурса йĕркеленĕ куравсем урлă республикăн иртнĕ пурнăçĕпе, пултарулăхĕпе тĕплĕн паллашнă. Унсăр пуçне викторина ыйтăвĕсене хуравланă, тупмалли юмахсен тупсăмне пĕлме тăрăшнă. Тăван чĕлхепе хуравланисене кăна шута илнĕ. Вĕренекенсем хăйсем те чăваш поэчĕсен сăввисене вуланă, мероприятие хастар хутшăннă. Уйрăмах Света Соколова, Олеся Емельянова, Дима Краснов, Артем Тимонин, Николай Тиняков тата Николай Шумилов палăрнă.

## Пирус тĕтĕмĕсĕр пурăнасчĕ

**Комсомольскинчи 1-мĕш вăтам шкулта вĕренекенсем сывă пурнăç йĕркине кăмăллаççĕ. Тĕслĕхрен, "Малалла утакансем" сывлăх командин волонтерĕсем Комсомольски салинче "Раççее пирус тĕтĕмĕнчен тасататпăр" ятпа акци ирттернĕ.** Ăна Пĕтĕм тĕнчери пирус туртмасăр пурăнмалли куна (çу уйăхĕн 31-мĕшĕ) халалланă. Çамрăксен шухăшĕпе хăйсемпе пĕр çулхи тантăшĕсем кăна мар, аслă ӳсĕмрисем те, районта пурăнакан мĕнпур çын хăйĕн сывлăхĕшĕн яваплă пулмалла.

Волонтерсем "Эпĕ пирус туртман Раççейшĕн. Эсĕ вара?" плакат ӳкернĕ, чĕлĕм сиенĕ çинчен буклетсем хатĕрленĕ. Ятарлă анкета тăрăх ял çыннисемпе ыйтăм ирттернĕ, вĕсем пирус туртнипе, мĕншĕн çапла тунипе тата усал йăларан хăпма кăмăл пуррипе е çуккипе кăсăкланнă, ырă сĕнӳ-канаш панă. Ыйтăма хĕрарăмсем те, арçынсем те, ватăсем те хутшăннă. Шел те, арçынсенчен нумайăшĕ чылай çул чĕлĕм туртни палăрнă.

Кăларăма Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.

## Компенсаци кама тивĕ-ши?

**Çурта тĕпрен юсама тӳленĕ тăкака саплаштарассĕ тенине илтрĕм. Компенсаци кама тивĕ-ши?**

**Валерий СЕРГЕЕВ. Çĕрпӳ районĕ.**

Компенсаци пĕччен пурăнакан, ĕçлемен, 70 тата 80 çулти çурт-йĕр хуçисене е пенси çулне çитнĕ ĕçлемен граждансен çемйине параççĕ.

Компенсаци республика территоринче пурăнакан граждана пĕр хваттершĕн кăна тивет. Ăна илме çурт-çĕрпе коммуналлă пулăшушăн парăм пулмалла мар. Çав шутра тĕпрен юсама взноса та вăхăтра тӳлесе пымалла. Е парăма килĕшӳпе татма тăрăшмалла.

## Теплица вăхăтсăр вансан

**Иртнĕ çул поликарбонатран тунă теплица туянтăм. Анчах вăл хĕл каçаймарĕ – юр йывăрăшне чăтаймасăр ишĕлсе анчĕ. Туяннă чухне вара 10 çул таран гаранти пачĕç. Халĕ пирĕн мĕн тумалла-ши? Документсем пур.**

**Александр НИКИФОРОВ. Шупашкар районĕ.**

Гаранти вăхăчĕ тухмасăрах теплица вансан «Потребитель прави çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн (ФЗ, 18-мĕш статья) ăна сутнă çын е теплица хатĕрлекенсем патне çитмелле.

Сирĕн çакна тума ирĕк пур:
- ✓ çакăн йышши тепĕр таварпа улăштарма;
- ✓ таварăн кăшкарне çĕнетме;
- ✓ хака чакарма;
- ✓ тавар çитменлĕхне пĕтерме е хăвăрах юсасан тăкака саплаштарма.

Потребитель хайĕн правипе гаранти вăхăчĕ тухман чухне кăна усă курма пултарать. Çакна та манмалла мар: сутуçă юрăхсăра тухнă тавара тавăрттарма (сутуçă шучĕпе) пултарать. Тата теплица сирĕн айăппа ваннине те çирĕплетмелле.

## Прописккăна тăрасчĕ

**Çурт лартрăмăр. Газ, шыв, канализаци илсе пынă. Шалта юсав ĕçĕсем кăна юлнă темелле. Анчах пире унта прописккăна тăратмарĕç. Сăлтавĕ – çуртра юсав ĕçĕсем пĕтменни. Тĕрĕсех-ши?**

**СЕМЕНОВСЕМ. Сĕнтĕрвăрри районĕ.**

Тĕрĕсех. Пурăнма юрăхлă çуртйĕрте кăна прописккăна тăма юрать. Вăл пурăнма юрăхлине çурта хута янин акчĕпе çирĕплетмелле. Çитменнине, сирĕн унта пурăнма ирĕк пурри не çирĕплетекен документ кирлĕ (çурт харпăрлăхра пулнин документчĕ).

## Хваттер сутсан

**Хваттер сутса яла пурăнма куçасшăн. Куçман пурлăха сутнăшăн налук тӳлемелле-ши?**

**Василиса Николаевна, 65 çулта. Канаш хули.**

Федераци саккунĕпе куçман пурлăх сирĕн харпăрлăхра 5 çултан сахалрах пулсан тӳлеме тивет. Енчен хваттере 2016 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен туянсан вăл харпăрлăхра 3 çултан кая мар пулмалла. Харпăрлăхра самай вăхăт пулсан налук тӳлемеççĕ.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Йĕркеллĕ пăранлатăр

**Пирĕн качака тăватă вилĕ путек пăранларĕ. Карланки айĕнче чăх çăмарти пысăкăш муклашка пурччĕ. Е вăл витĕм кӳчĕ, е урăх сăлтав. Хăй малтан вицĕ хут пăранланă, путекĕсем чиперехчĕ.**

**Тепĕр качака та пăранламалла. Мĕн сĕннĕ пулăттăр-ши?**

**Людмила. Елчĕк районĕ, Шăмалак ялĕ.**

Малашне çакна асра тытăр: пĕтĕ выльăха ытлашши ан чуптарăр. Пăранлама вăхăт çитсе пынă май ытларах тимлĕх уйăрăр, ачашлăр. Ку тапхăрта пăрçа йышши апат сахалрах çитерĕр, курăкпа апатлăр. Енчен качака темиçе путек кĕтсен ăна протеинпа кальци нумайрах кирлĕ, вĕсем пăрçа йышши культурăсенче пур. Пĕтĕ чухне ятарлă апат рационне пăхăнмалла, кальци, фосфор ытларах хушмалла, 2 процент тырă тата шăмă çăнăхĕ пулмалла. Пăранличчен 3-4 кун юлсан сĕткенлĕ апат çитермеççĕ, тулă хывăхĕ параççĕ. Апат тутлăлăхне икĕ хут чакараççĕ. Ытлашши çитерсен качакана пăранлама йывăр, çавăнпа 2-3 эрне юлсан апат виçине чакармалла, çăмăллине (тырă хывăхне, пĕçернĕ çĕрулмие, кăшмана ăшă шывпа хутăштарса) памалла.



Пăсăлнă, пахалăхсăр апат çитерни, ытла сивĕ шыв ĕçтерни сиенлĕ. Пăранличчен икĕ уйăх юлсан качакана нӳрĕ вырăнтан сыхламалла, çанталăк питĕ хăвăрт улшăннине туймашкăн памалла мар. Уçă сывлăша кăлармалла, анчах тикĕс çĕр çине, вăл хӳме е канав урлă сиксе каçма ан пултартăр.

Пĕтĕ качака кетоз чирĕпе чирлессинчен асăрханмалла. Çинĕ апат шăкпа е ытти каяшпа тухмасан пӳре ĕçлейменрен организм наркăмăшланать.

## Бройлер чĕпе апатласси

**Пĕрремĕш хут чĕпе çăмартаран тухнă хыççăн 12-13 сехетрен кая юлмасăр апатлаççĕ. Япăх çиекенни вăйсăрланса вилме те пултарать. Кун пек инкек килсе ан тухтăр тесен унăн пĕсехине пирвайхи кунранах тултарма тăрăшмалла. Вăл пушă пулсан ирĕксĕрлесе çитермелле. Чĕпе уйăраççĕ те çурма шĕвĕ апат – пĕçернĕ çăмарта саррине сĕтпе хутăштарса параççĕ. Ирĕксĕрлесе çапла 2-3 хут çитерeççĕ. Кун хыççăн чĕп вăйланать, вар-хырăмĕ лайăх ĕçлеме тытăнать.**

Пĕрремĕш кун бройлера пĕçернĕ çăмартапа (лайăх çăрса), вĕтетнĕ ешĕл курăкпа, терка витĕр кăларнă кишĕрпе апатлаççĕ. Пиллĕкмĕш кунран апата минерал хутăшĕпе (выльăха памалли авăртнă пулă, йывăç кĕлĕ тата ытти те) пуянлатаççĕ. Хăш-пĕр чухне витене шултра йышши хăйăр хурса параççĕ. Килти апат юлашкийĕсене те çитерме юрать: çăкăр тĕпренчĕкĕ, пĕçернĕ çĕрулми, сухари тата ытти те. Пахалăхлă йӳçĕхнĕ сĕт те чĕпшĕн усăллă, ăна уйрăм савăтра параççĕ. Япанах таса шыв ĕçтермелле. Вунпĕрмĕш кунран авăртнă тырă, унăн хывăхне, выльăх апатне, симĕс курăк ытларах хушаççĕ. Çирĕм кунран тулли тырă пĕрчи çитерме хăнăхтараççĕ.

Апатлантармалли йĕрке: **ирхи 6 сехетре** – вĕтетнĕ типĕ тырă; **9 сехетре** – йĕпетнĕ апат; **12 сехетре** – вĕтетнĕ типĕ тырă; **15 сехетре** – йĕпетнĕ апат; **18 сехетре** – йĕпетнĕ апат; **21 сехетре** – вĕтетнĕ типĕ апат.

Йĕпетнĕ апата йӳçĕхнĕ сĕте терка витĕр кăларнă кишĕрпе е тин çеç татнă симĕс курăкпа тата теркăланă çĕрулмипе хутăштарса хатĕрлеççĕ.

# Сурăх çăмне çуса упратпăр

Каснă хыççăн сурăх çăмне сĕтел çинче типĕтмелле, унтан силлемелле. Кашни пая валик майлă чĕркемелле (малтан хĕррине вăрăмăш тăршшĕпе варринелле пуçтармалла, кайран ыттине те ытлашши çăтă тумасăр валике пуçтармалла).

Çунă çăм уйрăмах лайăх упранать. Ăна супăньлĕ тата содăллă шĕвеке яраççĕ. Çапла тума 100 г хуçалăх супăньне тата 50 г содăна 6 литр вĕри шывра ирĕлтереççĕ. Ун хыççăн хатĕр 2 л супăнь хутăшне 8 л вĕри шывпа (45-50 градус) хутăштараççĕ. Çак шĕвеке çăм яраççĕ, кăшт пăрса çăваççĕ. Ун хыççăн питĕ тĕплĕ чӳхеççĕ, пăраççĕ, сӳхе сийпе сарса типĕтеççĕ. Ку ĕçе уçă сывлăшра пурнăçланă чух типсе пыракан çăма марльăпа витмелле, унсăрăн çил вĕçтерме пултарать.

Çунă çăма типĕ, тăтăш уçăлтаракан вырăнта упрамалла, пир е хут хутаçра тытмалла.

**Ольга ДАВЫДОВА. Çĕмĕрле районĕ.**

ПАХЧАÇĂ

# Йĕплĕ çырлан вицĕ вăрттăнлăхĕ,

## е Пĕр тĕмĕрен 20 кг çимĕç мĕнле илмелле?

**1. ШĂВАРНИ**

Йĕплĕ çырла (крыжовник) чечеке ларнă хыççăнах тĕмĕ айне 10 кг çĕрĕшнĕ тислĕк е компост хывмалла. Ятарлă шĕвекпе сирпĕтни чир-чĕртен упрать, çĕр пулăхне ӳстерет: 3 кг йывăç кĕле 10 л шывра ирĕлтермелле. Талăкран сăрхăнтармалла. Çимĕç тĕвĕленсен çакна тумалла: 10 л шывра 2 апат кашăкĕ нитрофоска, 2 апат кашăкĕ гумат хушмалла. 1 тĕме 3 витре шĕвекпе шăвармалла.

**2. ТĔРĔС ЛАРТНИ**

Йĕплĕ çырла тĕммисен хушшинче пушă вырăн хăвармалла. Юнашар пахчаçимĕç е чечек лартсан ӳсен-тăранăн тутлăхлă япалисене туртса илет, тухăç палăрмаллах чакать. Юнашар йĕплĕ çырлан тĕрлĕ сортне лартни вара тухăça икĕ хут ӳстерет.

**3. ЫТЛАШШИ ТУРАТА КАСНИ**

Йĕплĕ çырлана лайăх пăхмалла. Вăйсăр аталаннă туратсене касмалла – вĕсем ӳсме чăрмантараççĕ. Çимĕç ытлашши çăра тĕвĕленсен кăштах сайралатмалла. Çырлине пуçтарса илсен çамрăк хунавсен тăррине чĕпĕтсе илмелле. Вицĕ çулти туратсене те касмалла. Икĕ çултисене тăвата турат хăварсан çителĕклĕ.



# Хурлăхан çулçи хĕрелсен



Хура, хĕрлĕ хурлăхан çулçи хĕрелни тĕмĕне курăк пыйти тапăннине кăтартать. Вăл ытларах хĕрлĕ, шурă, сарă хурлăхана сиенлет. Кăпшанкă çăмарти тĕмĕре хĕл каçать. Çуркунне пĕррремĕш çулçăпа пĕрлех курăк пыйтин хурчĕ те курăнма пуçлать. Сăтăрçă çулçăн аялти пайĕнче вырнаçать. Хурт сиенленĕ çулçă хĕрелет. Тĕмĕн тухăçĕ те палăрмаллах чакать. Курăк пыйтине вăхăтра пĕтермесен вăл çаралса юлать.

Хурлăхан çырли пиçнĕ вăхăтра çунатлă ами тухать. Вăл курăк çине куçать. Кĕркунне каллех хурлăхан патне таврăнать, çамрăк хунав çине çăмарта хăварать.

Сăтăрçăсем сахал пулсан **томат е çĕрулми çеçкинчен, ыхраран, шĕпĕн курăкĕнчен хатĕрленĕ шĕвекпе** усă курмалла. Чĕрĕ ӳсен-тăрана е ыхрана аш арманĕпе вĕтетмелле, сивĕ шыва ямалла. 10-15 минутран шĕвекне сăрхăнтарса илмелле. Çулçăна лайăх çыпçăнма унта супăнь хутăшĕ ямалла (1 л ăшă шыва 30 г кĕпе-йĕм супăнĕ). Шĕвекпе тӳрех хурлăхан тĕммине сирпĕтмелле.

**Тепĕр мел – кĕл хутăшĕ.** Вăл курăк пыйтине кăна мар, ытти сăтăрçăсене те пĕтерет, чир-чĕртен сыхлать. Ăна çапла хатĕрлеççĕ: 1 л йывăç кĕлне 3 л вĕрекен шывпа хутăштармалла. Талăк тăрăлтармалла. Кĕл тăррине юхтарса илмелле, 10 л çитиччен шыв хушмалла. Енчен çак мелсем те пулăшмасан çимĕçне пуçтарса илнĕ хыççăн «танрек», «биотлин БАУ», «алиот», «актару» препаратсемпе усă курмалла.

Шĕвеке е препарата çулçăн аялти пайне, сăтăрçă пуçтарăнакан вырăна ытларах сапмалла.

СЫВЛĂХ

# Сулана упрамалла

Чĕре, вар-хырăм, пĕвер ыратсан эпир тÿрех тĕрлĕ майпа сипленме хыпаланатпăр. Темшĕн-çке, сулана (селезенка) тимлĕх сахал уйăратпăр, питĕ пĕлтерĕшлĕ орган вырăнне хумастпăр пулас. Анчах вăл иммун тытăмĕн органĕсенчен пĕри шутланать. Сула чирлĕ чух пирĕн организм шăнса пăсăлнипе инфекцисемпе кĕрешеймест. Вăл йĕркеллĕ ĕçлетĕр тесен уншăн мĕн усăллине тата сиенлине пĕлмелле.

**УСĂЛЛĂ**

✓ Уйрăмах – сарă-хĕрлĕ тата сарă тĕслĕ улма-çырлапа пахчаçимĕç (кавăн, кишĕр, пылак пăрăç, ясмăк).

✓ Çутçанталăк продукчĕсенчи сахăр. Вĕсен шутне пылак тымарçимĕç (çарăк, кăшман, кишĕр), пыл, хура çырла, банан кĕрет.

✓ Çителĕклĕ чухлĕ шыв ĕçмелле, анчах апат çинĕ вăхăтра мар, унччен 30 минут маларах е пĕр-икĕ сехет иртсен.

✓ Импĕр питĕ усăллă. Кунсерен унран хатĕрленĕ чей ĕçĕр, импĕр порошокне апата хушăр.

✓ Ытлашши вĕри е сивĕ мар апат çимелле. Унсăр пуçне вăл организмра çăмăллăн шăранмалла, урăхла каласан, апата лайăх чăмласа çимелле.

✓ Сула аптăратсан хĕрлĕпуç (кровохлебка) шĕвекĕ ĕçмелле: унăн тымарне вĕтетмелле, икĕ апат кашăкĕ илсе пĕр стакан вĕри шыва ямалла, çирĕм минут тытмалла, сивĕтмелле, сăрăхтармалла. Шĕвеке вунă кун хушши пĕрер апат кашăкĕ кашни апат умĕн ĕçмелле. Çичĕ кун тăхтав тумалла, ун хыççăн сиплеве малалла тăсмалла.

✓ Сула пĕвер пекех йывăр, сиенлĕ апата юратмасть: тĕтĕмленĕ, ăшаланă аш-какая, çу, маргарин нумай янă çăкăр-булкăна, çăратакан, тутлă шăршă кĕртекен тата ытти хутăшлă çимĕçе.



Хĕрлĕпуç

# Качака сĕчĕ усăллă

Чăн та, çапла иккен. Унра витаминсем, макро- тата микроэлементсем (магни, фтор, тимĕр, кальци, кобальт) ĕне сĕтĕнчен ытларах. Лактоза вара – сахалрах, çавăнпа вăл хăш-пĕр çынсене (камăн организмĕнче лактоза япăх шăранать) варвиттине ямасть.

Качака сĕтĕнче усăллă çу кислоти нумай, вĕсем холестерин ылмашăвне лайăхлатаççĕ, чылай инфекци чирне хирĕç тăма пултараççĕ.

Качака сĕтне вăл е ку продукта питĕ сисĕмлĕ çынсен те ĕçме юрать, мĕншĕн тесен унран аллерги пулмасть. Качакан вĕретнĕ сĕчĕ бронхит, ÿпке туберкулезĕ, аллерги чирĕсене сиплеме пулăшать. Анорекси, ват хăмпинче чул пуçтарăнсан, ыйхă килмесен, хырăмлăх е 12 пумăклă пыршă çĕрсен, щит парĕсем ыратсан, артрит, экзема тата ытти аптăратнă чухне те усăллă.

Тин çуралнă ачана амăшĕн сĕчĕ çитмен чух та унран ырри çук, мĕншĕн тесен унри япаласем хĕрарăмăн кăкăр сĕтĕнчи пекех. Унăн уссине çак тĕслĕх те çирĕплетет: Болгарире, Кавказра качака сĕтне тата унран хатĕрленĕ продуктсене юратаççĕ. Çак çĕршывсенчи çынсем нумай пурăнаççĕ. Апла, качака сĕчĕ ĕмĕре вăрăмлатма та пулăшать.

# Урпа кĕрпи пăтти

Урпа кĕрпинчен пĕçернĕ пăтă тутлă та усăллă. Анчах пĕри унпа çăмăллăнах апатланать, тепри шикленет. Унăн усси тата сиенĕ пур-мĕн.

Специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх – урпа кĕрпи пăтти пÿрене, ват хăмпине, эндокрин тытăмне, вар-хырăма сывă тытма пулăшать. Анчах хырăмлăхри йÿçеклĕх шайĕ пысăк чухне апат рационне кĕртме сĕнмеççĕ. Туалета час-часах каяйман çынсен те ăна асăрханса çимелле. Ача çуратма хатĕрленекен хĕрарăмсен сыхă пулмалла, мĕншĕн тесен унра хăйне майлă белок – глютен – упранать. Арçынсен те ытлашши нумай çиме юрамасть, ар вăйсăрлăхĕ чакать.

Çаксене шута илмесен урпа кĕрпи пăтти усăллă. Унра бактерисемпе вăйлă кĕрешекен гордецин пур. Кăмпа чирĕсене сыватнă чух унпа танлашаканнине тупаймăн. Пăтă организмри сиенлĕ япаласене кăларма, аллергипе кĕрешме пулăшать.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

ТĔПЕЛ

# Çуллахи апат-çимĕç

**СЫР ПОМИДОРПА**

*Кирлĕ пулать: 10 помидор, 150-200 г сыр, 2 шăл ыхра, петрушка çулçи, хăйма е майонез.*

1. Помидорăн «шлепкине» касмалла, çемçе пайне кăларса илмелле.

2. Сыра вилкăпа çемçетмелле е теркăпа хырмалла, ыхрана, ешĕл çимĕçе вĕтетмелле, хăймапа е майонезпа хутăштармалла. Хутăша помидора тултармалла. Çиелтен «шлепкине» хумалла.

**РАГУ**

*Кирлĕ пулать: 600-700 г ĕне ашĕ, 600 г помидор, 2 пылак пăрăç, 2-3 кабачок, 1 сухан, 1 кишĕр, 3 шăл ыхра, укроп, 2 лавр çулçи, ÿсен-тăран çăвĕ, авăртнă хура пăрăç, тăвар.*

Сухана вĕттĕн турамалла, кишĕре теркăпа хырмалла, ыхрана вĕтетмелле, аша вакламалла.

Ÿсен-тăран çăвĕнче сухан, кишĕр, ыхра ăшаламалла, аш хушса саралса хĕреличчен тытмалла. Кăштах шыв ярса аша çемçеличчен пăшăхламалла. Тăвар, пăрăç сапмалла.

Помидор, кабачок, пăрăç тăваткал турамалла, ашпа хутăштармалла. Кăштах шыв ярса 1 сехет пăшăхламалла. Савăта хупăлчипе хупмалла. Тăвар, пăрăç, лавр çулçи, вĕтетнĕ ешĕл çимĕç ямалла, çулăм çинчен илмелле.

# Кил хуçи хĕрарăмне

**МАРИНАД.** Аш-какай пĕçернĕ чухне маринадпа усă курсан тутлă, техĕмлĕ пулать. Уксус вырăнне лимон йÿçекне ямалла – сывлăхшăн усăллă. 1 апат кашăкĕ лимон йÿçекне 2 апат кашăкĕ шывпа хутăштармалла.

**ПИСЕВ.** Тумтире е салфеткăна писевпе лектерсен çапла тасатаççĕ: вараланнă вырăна вазелин сĕрмелле те 1 сехет тытмалла. Унтан кĕпе-йĕм супăнĕпе вĕри шывра çумалла.

**ПАХЧАÇИМĔÇ УПРАМА**. Пахчаçимĕçе, улма-çырлана вăрах вăхăт упрама ăна холодильника хуриччен çумалла мар.

ЮРАТНĂ ЮРĂ

**Фарида Файзулина юрланине итлеме кăмăллатăп. Илемлĕ кĕвве, чуна витерекен сăмахсене итленĕ май куç та шывланать. Хаçатра «Ман килес» юрра пичетлесе кăлараймăр-ши?**

**Елена ИВАНОВА.**

**Çĕрпÿ районĕ,**

**Михайловка ялĕ.**

## Ман килес

*Валерий Раштав сăмахĕсем*

1. Васкаса утатăп эп уй тăрăх,
Таврăнатăп савнă ялăма.
Килĕм ăшшинче пулманшăн тăтăш
Айăплă туятăп халь хама.
**Хушса юрламалли:**
**Таврана сăнатăп та эп, акă,**
**Ытарма хитре тăван кĕтес.**
**Укăлча умне чĕнет сукмакăм.**
**Сывă-и: ял-йышăм, ман килес!**

2. Çул айккипе çил вĕрнĕ майăн
Хумханать сар тинĕс пек ыраш.
Симĕс айлăмра çĕре пуç тайнăн
Йăмрасем кашлаççĕ каш! та каш!
**Хушса юрламалли.**

3. Тÿпере тăри юрлать илемлĕн,
Ыр сунса мана вăл саламлать.
Унăн сассине итленĕçемĕн
Чунăмра çĕн кĕвĕ çырăнать.
**Хушса юрламалли.**

ПĔЛМЕ КĂСĂКЛĂ

## Выçă çын кашкăрпа тан

Швейцари ăсчахĕсем тĕпчесе палăртнă тăрăх – çын выçă чухне грелин гормон шайĕ хăпарса каять. Çакă ăна йĕркеллĕ шутласа йышăнма чăрмантарать. Выç хырăмла йăнăш утăмсем тăвасси те часах. Çавăнпа татăклă утăм тăвиччен, йышăничен лайăх çимелле, канса илмелле.

## Розмарин ăс-тăна лайăхлатать

Акăлчан ăсчахĕсем шăршă çынна, ăс-тăнне мĕнле витĕм кÿнине тĕпчесе палăртнă. Розмарин шăрши сарăлнă пÿлĕмре ларакансен ăс-тăнĕ лайăххрах ĕçлени палăрнă: вĕсем хăвăрт астуса юлнă, умри тĕллеве те çăмăллăнах татса панă.

## Бактери саракан косметика

Куллен сăн-пите илем кÿрекен косметика та хăрушă чире яма пултарать иккен. **Унăн усă курас вăхăчĕ тухсан çийĕнчех кăларса пăрахмалла.** Срокĕ тухнă косметикăпа малалла та усă курсан вăл менингит, юн чирĕсене, гастроэнтерит ÿт-пÿ инфекцине пуçарать. Куç харши сăрламаллине висĕ уйăхран кăларса пăрахмалла, писевпе пите хĕретмеллине – çултаläкран. Хăвăр сывлăхăр çинче ан перекетлĕр.

САНАНИСЕМ

● Çимĕк каçхине хапха айне пилеш хĕреслесе хурсан чир-чĕр киле кĕреймест тесе калаççĕ.

● Çимĕк кун çывăрма юрамасть.

● Çимĕк кун çывăрсан çултаläкĕпех йывăр пулать.

● Çимĕке çичĕ тĕслĕ йывăçкурăкран милĕк тумалла теççĕ. Унпа çапăнсан чир-чĕр çулăхмасть.

**ПУЛАСЛĂХА СИСТЕРЕКЕН ТĔЛĔКСЕМ**

♦ Тĕлĕкре акăш курни – ача çураласса е туй пуласса.

♦ Алă пани – уйрăласса.

♦ Ака тусан, çĕр чавсан – çын вилессе.

♦ Çĕмĕрт – инкеке.

♦ Пашалу, шурă çăкăр çини – укça пуласса.

♦ Çăкăр çини – савăнăç.

КУЛĂШ КУШЕЛĔ

Ял хуçалăх институтĕнче экзамен пырать:

– Эсир хуçалăх ертÿçи тейĕпĕр. Сирĕн каллех тухăç çук. Сăлтавĕ мĕнре? – ыйтать преподаватель.

– Çанталăк условийĕ тата ытти те...

– Тата?

– Сăмахран, лартма мансан.

УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Çĕртме, 9 – кĕçнерникун | Çĕртме, 10 – эрнекун | Çĕртме, 11 – шăматкун | Çĕртме, 12 – вырсарникун | Çĕртме, 13 – тунтикун | Çĕртме, 14 – ытларикун | Çĕртме, 15 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 3.05 | 3.05 | 3.04 | 3.04 | 3.04 | 3.03 | 3.03 |
| | анать | 20.35 | 20.36 | 20.37 | 20.38 | 20.38 | 20.39 | 20.40 |
| Кун тăршшĕ | | 17.30 | 17.31 | 17.33 | 17.34 | 17.34 | 17.36 | 17.37 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун | 7-мĕш кун | 8-мĕш кун | 9-мĕш кун | 10-мĕш кун | 11-мĕш кун |
| | | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче |

# Пурнăç çулĕ – аслă çул

**Репрессине лексе миçе çын шар курман-ши? Шел, çак авăртан манăн мучи, Павел Макарович Макаров та хăтăлайман. 1906 çулта, Элĕк районĕнчи Исетеркkĕ ялĕнче (халĕ Муркаш районне кĕрет) йышлă çемьере çуралса ӳснĕ вăл.**

## Элек чĕлхи – çĕлен чĕлхи

1889 çулта маçак, Макар Тарасов Кĕртекасси хĕрĕпе, Перасковья Кузьминапа çемье çавăрнă. Вĕсен 11 ача çуралнă: Савин, Иван, Перасковья, Ирина, Анна, Емельян, Павел, Лаврентий (манăн атте), Екатерина, Карп, Фекла. Анчах тăваттăшĕ – Иван, Анна, Екатерина, Карп – нумай пурăнайман, ачаллах, тĕрлĕ чир-чĕре пула çĕре кĕнĕ.

Революци хыççăн, 20-30-мĕш çулсенче, кайран та, Сталин виличченех çĕршыври чылай çын репрессине лекнĕ. Çав шутра айăпсăр айăпланнисем те самай пулнă. Тытса кайнисенчен нумайăшĕ каялла таврăнайман, йывăрлăха, терт-нушана чăтаймасăр вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Мучи репрессие мĕншĕн çакланни мана вĕçĕм канăç паман. Хуравне тупма иртнĕ хĕл патшалăх историн архивне темиçе хут та çитме тиврĕ. Тĕпчев хыççăн çакă палăрчĕ.

Революци хыççăн, 1923 çулта Совет тапхăрĕнче чиркӳ икке пайланнă: пĕри – чăн-чăн православи чиркĕвĕ (Тихон патриарх çунаттийĕ), тепри – çĕнĕ влаç майли. Чăн православи тĕнне ĕненекенсем Совет чиркĕвĕсене çӳреме пăрахнă. Ларутăру пирĕн тăрăхра та çивĕчленнĕ. Исетеркkĕ тăрăхĕнчи çынсем ку ялти Николай Кондратьев килĕнче пухăнма тытăннă. Йыш 14 çынна çитнĕ. Вĕсем Турă кĕнекисем, кĕлĕ вуланă. Çав шутра Николай Кондратьев, Павел Макаров, Татьяна Данилова, Анна Васильева, Иван Васильев тата ыттисем те. Вăрманкас Сорăмран Иван Семенов, Кив Матьăкран Матвей Атласов та унта çӳренĕ.

Николай Кондратьев патне пирĕн мучи 1926 çултах çул хывнă. Ун чухне 20 çулти каччă пулнă вăл. Çĕвĕç ĕçне лайăх пĕлнĕ май унта çи-пуç çĕлесе панă. Пухăнса кĕлĕ вулакансене хăшĕ-пĕри сектантсем, Совет влаçне хирĕçле ĕçсем тăваççĕ тесе элек сарнă. Теприсем вара суя сас-хурана патшалăх политикин пĕрлехи управленийĕн Чăваш Енри уйрăмне (ОГПУ) çитернĕ. 1928 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче Исетеркkĕ тăрăхне С. В. Никитин уполномоченнăй вĕçтерсе çитнĕ. "Сектантсене" айăплама 191-мĕш номерпе ĕç пуçарнă.

Кондратьев патне çӳрекенсенчен ыйтса тĕпчеме тытăнаççĕ. Юрать, вăл вăхăтра тӳрех тытса кайман, персе пăрахман. Çавăнпа тăванĕсен айăпа кĕнисенчен нумайăшне тӳрленме пулăшма шантарса тĕрмерен хăтарса хăварнă. Çакăн хыççăн ушкăнпа пухăнса кĕлĕ вулама пăрахаççĕ. Анчах иккĕшне – Павел Макаровпа Татьяна Даниловăна – арестлесе тытса кайнă. Малтанах Шупашкар тĕрмине ăсатнă. Мĕншĕн тесен вĕсем хăрамасăрах Христос вĕрентĕвне нихăçан пăрахманнине, Турра хирĕçле влаçпа килĕшменнине пĕлтернĕ.



Павел Макаров

та çак влаç йышăнăвне пăхăнмастăп.

1928 çулхи нарăс уйăхĕн 13-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Исетеркkĕ ялĕнчи 48 çулти Татьяна Даниловăна та ыйтса тĕпченĕ. Тăлăх хĕрарăм 2 çил арманĕ тытнă.

– Эпĕ Совет влаçне йĕркеленсенех курайми пулнă. Вĕçĕмех пĕр-пĕр патша килессе кĕтнĕ. Курайместăп, мĕншĕн тесен вăл мана йăлтах çаратрĕ. Манăн 3 армана туртса илчĕ: пĕри – шыв, иккĕшĕ – çил арманне. Совет влаçне ылханатăп, çĕр тĕпне анса кайтăр вăл. Совет влаçне пăхăнмастăп, тек нимĕн те ан ыйтăр.

